● *Ас тăвăм*

**Анатолий ВОЛКОВ**

# Тете – пурнăçăмăн шанчăклă тĕревĕ

*Тетене – Г.Н. Волков академика – асăнса, пуриншĕн те тав туса*

Пурнăçăм çулне вĕçлесе пынă май пĕр иккĕленмесĕрех çапла калама пултаратăп: телейлĕ пулчĕ вăл. Кунта тетен витĕмĕ калама çук пысăк. Вăл манăн кун-çулăн шанчăклă тĕревĕ пулнă тесе шухăшлатăп. Яланах манпа юнашар тăнă, ытарайми тĕслĕх. Çавăнпа та ун пек пулас тесе тăрăшнă. Мĕн пурнăç тăршшĕпех вăл мана хавхалантарнă: вĕренӳре, ĕçре, литературăра...

Вăтăр саккăрмĕш çулта школа кайма хатĕрлентĕм. Анне шурă пиртен сумка çĕлесе пачĕ. Унта букварь, пĕр-икĕ тетрадь, кăранташ хутăм, ăна хул урлă çакса юлташсемпе пĕрле хавасланса /çуйхашса та!/ çырма урлă шкулалла таплаттартăм. Анчах та эпĕ хавасланни, васкани кăлăхах пулчĕ, мĕншĕн тесен учитель – Варсонофий Сергеевич – мана йышăнмарĕ.

– Эсĕ, Волков, миçере? – ыйтрĕ вăл манран эпĕ виçĕ кун маларах йышăннă парта хушшине кĕрсе ларнă-ларманах. Эп ăна саккăрта терĕм. Вăл мана шанмарĕ /ара эпĕ питĕ пĕчĕккĕ/, çавăнпа васкасах ял Канашне уттарчĕ /шкулпа юнашарахчĕ/. Учитель унтан часах таврăнчĕ те:

– Волков, сумкуна йăт та килне кай, пĕчĕкренех суйма вĕренмелле мар: эс саккăр мар, çиччĕ те тултарман-ха. Вĕренмелĕх ӳсеймен.

Мĕн тăвăн. Ăна итлемех тиврĕ. Сумкана йăтрăм та класран тухса утрăм. Хамăн йĕрес килет. Пур юлташ та кунта-çке-ха. Пур пĕрех чăтрăм, çын умĕнче куççуль кăлармарăм.

Тепĕр кунне, ĕнерхине манман пулсан та, татах шкулалла уттартăм. Теме шаннă ĕнтĕ пĕчĕкскер. Учитель ĕнерхи йышăнăвне пăрахăçласа вĕренме илĕ тенĕ-ши?

Шел те, Варсонофий Сергеевич ку хутĕнче те мана йышăнмарĕ, класа кĕнĕкĕменех мана каялла çавăрчĕ.

Каçхине çемье канашлăва пуçтарăнчĕ.

– Толя, кала-ха: вĕренессӳ килет-и санăн, çук-и? – ыйтать атте.

– Килет. Мĕнле ан килтĕр-ха? Питĕ вĕренес килет. Çавăнпа учитель хăваласан та икĕ кун кайрăм шкула. Тата урамра пĕчĕккисем кăна юлчĕç. Вĕсемпе выляма та, калаçма та çук. Вĕтĕр-шакăр ним те ăнланмасть. Ман шкула каяс килет.

– Мĕн тăвăпăр капла ачапа, Альтук? Ачамăр вĕренесех тет, – ыйтать атте аннерен.

– Ачана çул çитменнипе илмеççĕ пулсан мĕн тăвăпăр ĕнтĕ, Никантăр, – хуравлать анне. – Шкула кайсан лайăхрах пулĕччĕ те... Анчах та çулĕ çитмесен илмĕç те çав. Мĕн тумалла, Никантăр? Пĕлместĕп те.

– Гена, эсĕ – асли, яваплă çак тапхăрта сана çакăн пек хушатăп: шăллуна епле те пулсан шкула вырнаçтармаллах, шăллу кăçал шкула каймасан ĕççĕр-мĕнсĕр ним мар пăсăлса кайма пултарать. Кайран вара тӳрлетеймĕн те. Шăллу пирки ыранах завучпа е директорпа калаçса пăх-ха.

Тете атте хушăвĕпе килĕшрĕ /вăл хăй те пысăк ача мар-ха, тăваттăмĕш класра анчах/. Вăл лайăх ăнланать: аттерен питĕ яваплă ĕç илчĕ. Ăна епле пулсан та пурнăçламалла.

Тепĕр кунне эпĕ тетепе каллех шкулалла тăнкăлтатрăм. «Темле пулать ĕнтĕ паян, тете те вырнаçтарайĕ мана шкула, те каллех киле таврăнма тивĕ?» – тесе шухăшласа пыратăп тете хыççăн. «Тете, мĕнле шухăшлатăн, эсĕ мана паян шкула вырнаçтарайăн-ши?» – ыйтатăп унран. Иккĕленместĕп. Вырнаçтармалла. – «Тепĕр тесен, Толя, эпĕ хам вырнаçнă, мана никам та пулăшман». – «Санăн тетӳ пулман, çавăнпа эсĕ хăвах вырнаçайнă. Тата эсĕ ман пек пĕчĕккĕ те пулман», – терĕм эпĕ.

– Толя, çитĕ павраса, шкула çитетпĕр.

Шкулăн кивĕрех çурчĕ патне çывхарса пыратпăр /кунта аслăрах классем, директор вырнаçнă/.

– Пăртак кĕтсе тăр-ха, ниçта та ан пăрăн, эпĕ сан çинчен кĕрсе калаçам, – терĕ те çурта хăвăрт кĕрсе кайрĕ.

Часах тухрĕ те:

– Пурте йĕркеллĕ. Сана шкула илеççĕ. Эпĕ пулмасан ăçта кайса кĕреттĕн паян? Э?

– Эпĕ мĕн тăвам-ха ĕнтĕ, тете? Çул çитменнишĕн эпĕ айăплă-и вара?

– Эпĕ илтертĕм-çке. Учителе вĕренессӳ килни çинчен лайăхрах ăнлантармалла пулнă!

Тетепе малалла тавлашас темерĕм. Пур пĕрех усси пулас çук. Хăйĕннех перет. Паян хăй паттăр пулчĕ те-ха ĕнтĕ. Мана шкула вырнаçтарма хал çитерчĕ те. Çынна итлет-и халь? Яхăнне те çук.

Класа кĕретпĕр: эпĕ малтан, тете – ман хыççăн. Сĕтел хушшинче Варсонофий Сергеевич ларать. Хура куçне йăлтăртаттарса, кулам пек те тукаласа:

– Татах килтĕн-им, Волков? Килес çул кил тесе ятăм-çке-ха сана ĕнер кăна. Манрăн та-и? Сан ӳсмелле те ӳсмелле.

Эпĕ хирĕçлесе ним те калама ĕлкĕреймерĕм. Аптраса та ӳкрĕм темелле пуль. Татах хăвалать иккен ку терĕм. Тете çине кăна пăхса илтĕм. Халь унра çеç шанчăкăм. «Мĕн калать-ха ĕнтĕ? – вĕлтлетсе илчĕ пĕчĕк пуçăмра шухăш. – Вырнаçтарайĕ-ши мана е каллех ĕнерхи пекех сумкана йăтса килелле танккама тивĕ».

Тете çухалса каймарĕ, учителе куçĕнчен пăхса хытă саспа:

– Варсонофий Сергеевич, Илья Тимофеевич /шкул завучĕ/ манăн шăллăма шкула çӳреме ирĕк пачĕ. Çак ача /тете аллине ман еннелле сулчĕ/ кăçалах вĕренме пуçламалла терĕ.

– Хăçан каларĕ?

– Халĕ çеç. Эпир ун патĕнчен.

– Завуч ирĕк пачĕ пулсан, эппин, çӳретĕр. Эпĕ çакна хирĕç пулас çук. Пулаймастăп та. Аслисем каланине итлемеллех. Шăллу аптракан çын пекех туйăнмарĕ-ха. Ну, мĕн калам сана, Толя? Кун пек тетепе аптрамăн. Шел, пурин те çук ун пекки. Кĕрсе лар парта хушшине. Эсĕ пăртак юлтăн ĕнтĕ ыттисенчен, эпир пĕр сас паллипе – «А»-па – паллашма та ĕлкĕртĕмĕр.

– Эпĕ ку сас паллине тахçанах пĕлетĕп. Эпĕ пурне те пĕлетĕп, вулатăп та, – терĕм кăшт мухтанарах.

– Ну, ун пек пулсан маттур.

Тете эпĕ учительпе калаçнине кăмăллăн, йăл-йăл кулса итлесе тăчĕ. Вара сыв пуллашса класран тухса кайрĕ.

Çапла эпĕ, тете тăрăшнипе, авăнăн виççĕмĕш кунĕнче хамăн вĕренĕве пуçларăм. Тете хутшăнман пулсан темле каятчĕ ман пурнăç кустăрми малалла?.. Калама та пĕлмелле мар. Тепĕр çулччен тăхтама тивсен ман çичĕ е тата хăшĕ-пĕринпе вунă çул урăххисемпе выляса ӳсме тиветчĕ. Капла ачалăх кăна мар, пĕтĕм пурнăç та урăхларах кайма пултаратчĕ мар-и? Лайăхрах-и, начартарах-и, ăна халь калама та, пĕлме те çук.

Шкула аван паллăсемпе пĕтертĕм. Хусан медицина институтне çул тытрăм /кунта каясси пирки эпĕ тахçанах шухăшласа хунă/, анчах та пĕр балл çитменнипе вĕренме кĕреймерĕм. Тепĕр çулĕнче пур пĕрех кĕтĕм. Çулталăк çын патĕнче хваттерте пурăнтăм, нушалантăм теме те юрать-тĕр. Ун чух тете Хусан педагогика институтĕнче аспирантурăраччĕ. «Нимех те мар, – тет тете пĕррехинче. – Пĕр çул пурăн-ха çапла çын патĕнче нушаланса. Тепĕр çулĕнче сана пур пĕрех студентсен общежитине вырнаçтарăп». Пĕрремĕш курс пĕтерсен вăл ман çинчен партин Тĕп Комитетне Суслов патне çыру çырнă иккен /эп ун пирки кайран пĕлтĕм/, мана общежитие вырнаçтарма пулăшма ыйтнă. Çапла иккĕмĕш курсран общежитире пурăнма пуçларăм. Кунти пурнăç çын патĕнчинчен пур енĕпе те уйрăлса тăратчĕ. Çĕрпе тӳпе пекех.

Эпĕ тетен тĕслĕхĕпе институт хыççăн аспирантурăна кĕме тĕв турăм. Пĕр виçĕ çул пĕр-пĕр ял пульницинче ĕçлĕп те аспирантурăна çул тытăп теттĕм. Çакна шута илсе питĕ тăрăшса вĕрентĕм. Çанă тавăрсах темелле. Тăрăшни харама каймарĕ: института хĕрлĕ дипломпа пĕтертĕм.

Ĕçлеме Канаш районĕнчи Сиккассинчи участок пульницине кайрăм. Виçĕ çул ĕçлесен документсене Новосибирскри мединститута ятăм. Часах телеграмма илтĕм: пичетленĕ ĕçсем ярса пама ыйтаççĕ. Вĕсем манăн çук. Ал çырăвĕсем пур-ха. Анчах та пичетленнĕ ĕçсем мар-çке-ха. Мĕн тумалла? Çухалса кайрăм. Алăсене лăштăр усрăм.

Сасартăк эпĕ аптраса ӳкнĕ кун пульницана тете килсе çитрĕ. Вăл ун пирки мана пĕлтермен те. Эп ăна кĕтмен те. «Мĕнле ĕçӳсем, хăçан каятăн Новосибирска?» – ыйтать тете. Эпĕ ăна халех пичетленĕ ĕçсем ямалли, вĕсем манăн çукки çинчен пĕлтеретĕп. Вăл мана: «Ан хумхан, ан çун, сан пурте йĕркеллĕ пулать, – тет. – Санăн алă çырăвĕсем пур вĕт? Пур. Паянах Новосибирска çакăн пек телеграмма яратăн: «Пичетленĕ ĕçсене почтăпа янă». Лере ху çитсенех ал çырăвĕсене кăтартатăн. Ĕçĕ те пĕтрĕ. Лере кунпа ăнăçмасан эпĕ сана «Чăваш халăх педагогикинчи» халăх медицини çинчен çырнă сыпăка парнелĕп».

Çак кунах хам пуçтарăннă института телеграмма çаптартăм. Тепĕр кунах инçе çула тухрăм. Институтра ал çырăвĕсене те, пичетленисене те манран ыйтмарĕç. Экзаменсене ăнăçлă тытрăм – аспирант пулса тăтăм.

Тете Сиккассине килмен пулсан темлерех каятчĕ пурнăçăм: калама та, пĕлме те çук.

Аспирантурăна диссертаци çырса вĕçлерĕм. Ĕçлеме Актюбинскри мединститута ячĕç. Унта – Шупашкарта университет уçăличченех.

Шупашкара куççан университета ректор /С.Ф. Сайкин профессор/ патне тетепе кайрăмăр. Вăл пире ăшшăн, тарават йышăнчĕ. Ун патĕнче вăрах калаçса лартămăр. Семен Федорович манран çапла ыйтрĕ:

– Анатолий Никандрович, мĕнле шайра сирĕн доктор диссертацийĕ?

Эп çăвара уçиччен тете çапла калама ĕлкĕрчĕ те:

– Семен Федорович, унăн пурте йĕркеллĕ. Вăл пĕрремĕш вариантне çырса пĕтернĕ. «Кондицие» çитересси кăна юлнă. Тепĕр çултан хӳтĕлетех. Манăн кун пирки нимĕнле иккĕленӳ те çук.

– Ку лайăх. Питĕ лайăх. Пире докторсем кирлĕ. Ăслăлăх докторĕсемсĕр университет мĕнле ĕçлейтĕр-ха? Тепĕр çултанах хирургин пропедевтика кафедри уçăлмалла. Шухăшлатăп: эсир анатоми кафедринче ĕçлеме пултармалла. Хирургсем анатомие пĕлмеллех тетĕп. Çапла вĕт?

– Тĕрĕс калатăр, Семен Федорович.



Анатоми – хирурги никĕсĕ. Хирургăн анатомие пĕлмеллех.

Доктор диссертацийĕ çинчен те каласа хăварас. Тете ун пирки ӳстеререх каларĕ. Тĕрĕссипе, эпĕ ăна çырма пуçламан та-ха. Пур пĕрех тете каланине хирĕçлемерĕм. Ректор умĕнче тетепе килĕшме тиврĕ. Калани суя сăмах ан пултăр тесе çанă тавăрсах ĕçлеме тиврĕ. Çулталăк-çулталăк çурăра диссертацие çырса пĕтертĕм. /Манăн, паллах, диссертаци валли материалсем веçех пуçтарăннă пулнă, унăн фрагменчĕсем вунă-вун пилĕк журналта пичетленме ĕлкĕрнĕ/. Ку та – тете хавхалантарнипех. Ректор патĕнче вăл калани те – çав тĕллевпех.

Доктор диссертацине çырса пĕтертĕм те Мускава хамăн вĕрентӳçĕ И.Л. Брегадзе профессор патне çул тытрăм /Новосибирскра ун патĕнчех аспирантурăра пулнăччĕ, каярах вăл Б.В.Петровский академик патне Пĕтĕм Союзри Хирурги центрне куçнăччĕ/.

Вĕрентӳçĕ диссертацие хӳтĕлеве тăратма ирĕк памарĕ. «Ĕçлемелле те ĕçлемелле-ха», – терĕ. Эпĕ малалла ĕçлеме пултарайманнине туятăп. Мĕншĕн тесен мĕн каламаллине веçех каланă. Урăх çĕннине тупаймастăп. Ăнланатăп: ĕçе вăйлатма пултараймастăп, вăйсăрлатма, пăсма – нимĕн те мар.

Начар кăмăлпа таврăнтăм киле. Пулса иртни çинчен тетене каласа патăм. Вăл В.И.Ленин хăй вăхăтĕнче каланă пек: «Эпир урăх çулпа каятпăр, – терĕ. – Монографи çыратăн та хӳтĕлетĕн. Ĕçĕ те пĕтрĕ. Сана нимĕнле консультант та кирлĕ пулмĕ». Чăнахах та çапла турăм. Тепĕр çултан монографи пичетлерĕм те хӳтĕлеве Хусан мединститутне тăратрăм. Паллах, хамăн вĕрентекенĕмрен уйрăлмарăм, вăл пичетленĕ ĕçĕн редакторĕ пулчĕ, ăнах ăслăлăх консультантĕнче те хăвартăм. Хӳтĕлевчен «Медицинская газета» монографи çинчен пысăк рецензи пичетлесе кăларчĕ. Хусан медицина институтĕнче манччен монографи хӳтĕлени пулманни çинчен мана институт ректорĕ пĕлтерчĕ.

Эпир иксĕмĕр те Н.И.Пирогова юрататтăмăр. Вăл – педагог пулнипе, эпĕ – тухтăррипе.

Юлашки калаçу пирĕн Н.И.Пирогов çинчен пулчĕ. Вăл Мускавран тин çеç таврăннăччĕ. Николай Ивановичăн ик çĕр çулхи юбилейне икĕ академин – Медицина тата Вĕренӳ ăслăлăхĕсен – пĕрлехи сессийĕнче паллă тунăччĕ. Вăл та унăн ĕçне хутшăннăччĕ. Сессирен начар кăмăлпа таврăнчĕ. Çакă мана самаях тĕлĕнтерчĕ. «Эпĕ сессире çакна ăнлантăм, – тет. Чăнчăн педагогсем эпир мар иккен – тухтăрсем». Эпĕ унпа килĕшмесĕр: «Чăнчăн педагогсем – педагогсемех, тухтăрсем мар. Тухтăрсем – тухтăрсем кăна». Мĕншĕн вара, тет вăл, сессире Николай Иванович çинчен калаçнă чухне пире тухтăрсемпе танлаштарсан эпир, педагогсем, пит шуранка курăнтăмăр. Пирогова çителĕклĕ таран сăнлаймарăмăр. «Ан ман», – терĕм ăна хуравласа – Н.И.Пирогов чи малтан – хирург, унтан тин – педагог. Тĕнче историне вăл гени хирург пулса кĕрсе юлнă. Тĕнчере вăл хирург пулнипе паллă, педагог пулнипе мар. Вăл педагог пулнине хăш-пĕр тухтăр пĕлмест те. Паллах, тухтăр-академиксем ун çинчен педагогсенчен вăйлăрах каларĕç пуль. Мĕншĕн тесен тухтăрсем, ытларах хирургсем, Пушкин çинчен каланă пек /«Пушкин – наше все»/ Пирогов пирки те çаплах пĕлтерме пултараççĕ, педагогсем вара ун пек калаймаççĕ». Сăмахăма çапла çавăрса хурса тетене аран-аран лăплантартăм. Тете шухăшне малалла тăсса: «Эс пур пĕрех манпа килĕшетĕн пуль: тухтăрсен йышĕнчен мĕн чухлĕ паллă педагог тухнă çирĕммĕш ĕмĕрте. Аса илер-ха хăшне-пĕрне: Януш Корчак, Николай Амосов, Федор Углов, Михаил Булгаков. Çаксем тата пурте çыравçăсем. Тухтăрсенчен тухнă педагогсем, педагогика ăслăлăхĕнче те çутă йĕр хăварчĕç. Вĕсемпе пирĕн мухтанмалла».

Тете пиртен уйрăлни икĕ çул çитет пулсан та, ман çакна ниепле те ĕненес килмест. Мĕншĕн тесен эпĕ халĕ те унпа калаçатăп, канашлатăп, кăсăк тавлашусене малалла тăсатăп.

● *Курав*

# Миттов – искусствăри чăвашлăх пуçаруçи



**Çак кунсенче Наци библиотекин «Кĕмĕл ĕмĕр» галерейинче Чăваш художникĕсен союзĕн членĕсен «Миттов тата паянхи кун» пĕрлехи куравĕ уçăлчĕ. Ăна паллă ӳнерçĕ Анатолий Миттов çуралнăранпа 80 çул çитнине халалланă.**

Мĕн калама пулать-ха асăннă ăста пирки? Вăл чăннипех чаплă живописец тата график пулнă. Миттов – Чăваш Ен профессионал искусствинче наци стильне йĕркелес ыйтăва хускатакансенчен тата ăна пурнăçа кĕртекенсенчен пĕри.

Вăл Канаш районĕнчи Сиккассинче 1932 çулхи раштавăн 13-мĕшĕнче çуралнă. Ялти шкул хыççăн Шупашкарти ӳнер училищинче /1947-1952/ пĕлӳ илнĕ. Ленинградри И.Е.Репин ячĕллĕ живопиç, скульптура, архитектура институтĕнче /1954-1961/ вĕреннĕ вăхăтра чăваш халăх йăли-йĕркипе кăсăкланма тытăннă. Диплом ĕçĕ – Константин Ивановăн «Нарспи» поэмине илемлетсе тунă ӳкерчĕксем – Раççей Ӳнер академийĕн /Санкт-Петербург/ ăслăлăх тĕпчев музейĕнче упранать.

Тăван ене таврăнсан Анатолий Иванович И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче /халĕ университет/ преподавательте, Чăваш кĕнеке издательствинче ӳнерçĕре ĕçленĕ. Миттов 1971 çулхи юпа уйăхĕн 31-мĕшĕнче вăхăтсăр çĕре кĕнĕ.

Пĕр иккĕленмесĕрех çапла каламалла: Анатолий Миттов ĕçĕсем – чăваш искусствин ылтăн фончĕ.

Курав патне таврăнса çакна палăртмалла: унта Раççей тава тивĕçлĕ художникĕ Праски Витти, Чăваш халăх художникĕ Владимир Агеев, ЧР тава тивĕçлĕ художникĕсем Владислав Зотиков, Петр Пупин, Владимир Шведов, Валентин Федоров, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем Василий Кузьмин, Сергей Блохин, Вагиз Камалетдинов тата ыттисем те хăйсен ĕçне тăратнă. Курав сумне Анатолий Миттовăн «Атăл çинчен калани» картини çĕклет.

Вернисажа уçнă май Антонина Мордвинова искусствовед ентешĕмĕрĕн пултарулăхне тивĕçлĕ хак парса ăна чăваш халăхĕн генийĕ терĕ. Третьяков галерейинче Миттовăн 33 ĕçĕ упранать. Унăн хăйне евĕрлĕ пултарулăхĕ ун хыççăнхи темиçе ăрăва хавхалантарса, вăй парса тăрĕ.

Шупашкарти ӳнер училищин директорĕ Владимир Ануфриев шухăшĕпе Анатолий Миттов – училище мухтавĕ. Чăваш художникĕсен союзĕн председателĕ Василий Кузьмин, Праски Витти ӳнерçĕ, Геннадий Иванов-Орков искусствовед, ӳнерçĕ шăллĕ Виталий Иванович Анатолий Миттов пирки ăшшăн аса илчĕç.

■ **Надежда СМИРНОВА.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем.

● ***Куравран***





● *Чыслав*

# Спортсменкăпа тренера – хваттер уççи



**Лондонра иртнĕ Олимп вăййисенче Татьяна Архипова /Петрова/ марафонрачупса бронза медаль çĕнсе илнĕччĕ, çак çĕнтерӳшĕн вăл чылай наградăна тивĕçрĕ: "Тăван çĕр-шыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн", "Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн" орденсен медалĕсемпе, "Раççей спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ", "Вăрмар районĕн хисеплĕ гражданинĕ" ятсемпе чысларĕç.**

Нумаях пулмасть ЧР физкультурăпа спорт тата туризм министрĕ Сергей Мельников, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов тата "Честр-Инвест" строительство компанийĕн генеральнăй директорĕ Валерий Тарасов пултарулă спортсменкăна тата унăн тренерне Михаил Кузнецова тепĕр парнепе савăнтарчĕç – хваттерсен уççисене пачĕç.

"Татьяна çĕнтерĕвĕ – паттăрлăх. Марафонра ялан мала тухнă Африка спортсменкисемпе пĕр тан ăмăртса виççĕмĕш пуласса никам та ĕненмен пулĕ, вăл чăваш ятне ӳкермерĕ", – терĕ Сергей Владимирович. "Çитĕнекен ăру сиртен тĕслĕх илсе спортпа туслашакан йышланĕ, çамрăк спортсменсем çĕнтерӳ патне талпăнĕç. Паян вĕсем валли тĕрлĕ спорт керменĕ çĕкленет, стадионсем çĕнелеççĕ. Малашлăхра та тĕллевсем пысăк", – палăртрĕ хула пуçлăхĕ Л.Черкесов.

Татьяна Архипова ЧР Пуçлăхне М.Игнатьева, спорт министерствинче, хула администрацийĕнче ĕçлекенсене, строительсене, çавăн пекех хăйĕн тренерне тав турĕ. "Паянхи кун маншăн – чăн-чăн уяв. Çакăн пек парнепе савăнтарасса шухăшламанччĕ. Спортсменсене хавхалантарни, пулăшни питĕ пĕлтерĕшлĕ", – хĕпĕртерĕ вăл. Унăн тренерĕ Михаил Кузнецов малашне те тăрăшса ĕçлеме, пулас Олимп вăййисене хутшăнма шантарчĕ.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**

● *Спорт*

# Тĕрлĕ вăйăра

**Çуллахи сезон вĕçленсе пынă май тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕ ăмăрту финалĕсем иртеççĕ.**

**Саратовра** спорт мастерне Вадим Шпитыльнăя асăнса иртнĕ Пĕтĕм Раççейри вун çиччĕмĕш турнирта Шупашкарти ветерансен «Сталь» команди вылянă. Пирĕн командăна Ишлейри «Звезда» футболисчĕсемпе вăйлатнă. Ентешсем ушкăнри вăйăра Саратов облаçĕнчи Романовкăри «Сокола» 4:0 шутпа çĕнтернĕ.

Краснодар крайĕнчи **Полтавская** станицăра Шупашкарти «Волга» вылянă, кунта Раççейри ветерансен ăмăртăвĕн çиччĕмĕш финалĕ иртнĕ. Пĕлтĕр Шупашкарта иртнĕ улттăмĕш финалта «Волга» виççĕмĕш вырăн йышăннăччĕ. Кăçал вара наградăсем илеймен – тăваттăмĕш вырăнта юлнă.

Сочи çывăхĕнчи **Лазаревское** поселокра регионсен хушшинчи «Атăлçи» футбол союзĕн уçă кубокĕн вуннăмĕш турнирĕнче Шупашкарти «Энергия» ăмăртнă. Тăхăр команда хутшăннипе иртнĕ турнирта пирĕн команда улттăмĕш вырăн йышăннă.

**Волгоградра** «Динамо» спорт обществин мини-футбол вăййин финалĕ иртнĕ. Кăçал Атăлçи округĕнче пĕрремĕш вырăна тухнă Шупашкарти «Динамо» кунта округ чысне хӳтĕленĕ. Вăл Тюмень /4:0/, Краснодар /5:0/ командисене çĕнтернĕ, Санкт-Петербург /2:5/, Чита /3:5/, Волгоград /1:4/, Камчатка /1:4/ командисене выляса янă, вун икĕ коллектив хушшинче тăххăрмĕш вырăн йышăннă.

Наркоконтролĕн федераци службин Чăваш Республикинчи управленийĕн мини-футбол команди **Пензăра** унти управленин кубокне çĕнсе илессишĕн иртнĕ тăххăрмĕш турнирта иккĕмĕш вырăн йышăннă. Пирĕн команда Мордва /3:1/ тата Оренбург /2:0/ командисене çĕнтернĕ, Пензăри суд приставĕсемпе 3:3 шутпа вылянă. Пенза /2:9/ командине выляса янă, финалта кил хуçисене 1:9 шутпа паркнă.

■ **Владимир КРЫСИН**

● *Тем те пĕр*

**● Бразилире тĕлĕнмелле йывăç пур. Вуллине çĕçĕ вĕçĕпе кăштах чышсанах ӳсен-тăран «сĕчĕ» юхса тухать. Çапла пĕр хутĕнчех йывăç 4 литр таран сĕт парать. Ăна кăштах шывпа хутăштармалла та вĕретмелле çеç.**

**● Арави çур утравĕнче хăйне евĕрлĕ ӳсен-тăран пур. Ăна «кулă чечекĕ» теççĕ. Унăн пăрçа пысăкăш вăррине пула çын çур сехет кулать, кайран лăпкăн çеç çывăрса каять. Стоматологсем «кулă пĕрчисене» новокаин хыççăн аллерги пулсан параççĕ.**


Факс: /8352/ 28-83-70. E-mail:hypar2008@rambler.ru реклама пĕлтерӳ Тел.: 28-83-70. 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

**Раççей Федерацийĕн «Раççей Федерацийĕнчи судьясен статусĕ çинчен» саккунĕн 5 статйипе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Судьясен квалификаци коллегийĕ вакантлă çак должноçсем уçăлни çинчен пĕлтерет:**

**– Чăваш Республикинчи Шупашкар хулинчи Ленин районĕн 1-мĕш суд участокĕн миравай судйин,**

**– Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн 2-мĕш суд участокĕн миравай судйин,**

**– Чăваш Республикинчи Çĕнĕ Шупашкар хулин 1-мĕш суд участокĕн миравай судйин,**

**– Чăваш Республикинчи Çĕнĕ Шупашкар хулин 4-мĕш суд участокĕн миравай судйин,**

**– Чăваш Республикинчи Çĕнĕ Шупашкар хулин 5-мĕш суд участокĕн миравай судйин,**

**– Чăваш Республикинчи Вăрмар районĕн 1-мĕш суд участокĕн миравай судйин,**

**– Чăваш Республикинчи Елчĕк районĕн 1-мĕш суд участокĕн миравай судйин.**

**Раççей Федерацийĕн «Раççей Федерацийĕнчи судьясен статусĕ çинчен» саккунĕн 5 статйин 6 пунктĕнче кăтартнă тивĕçлĕ документсемпе ыйтса çырнисене ĕç кунĕсенче 2012 çулхи чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕччен – 8-12 сехетсенче тата 13-17 сехетсенче, 2012 çулхи чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕнче 18 сехетчен çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Байдуков урамĕ, 23 çурт, 432 пӳлĕм.**

**Конкурса хутшăнакансем ыйтса çырнисене ăçта тата хăçан пăхса тухассине палăртнă йĕркепе пĕлтерĕç.**

## ПРОДАЮ

**6.ПЕСОК, гравмассу. Услуги** КамАЗа. Т. 8-927-845-26-01, **37-96-10.**

**25.Гравмассу, керамблок, песок, торф.** Доставка. Т. 8-902-327-75-85.

**291.Профнастил, металлочерепицу, сайдинг,** водостоки. Доставка, монтаж. Т. 89053445186.

**691. Гравмассу, щебень, песок, керамзит.** Доставка от 10-15 тонн. Т. 89053465671.



чăваш халăх хаçачĕ ХЫПАР

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ

Раççей Федерацийĕн Пичет комитетĕнче 1996 çулхи раштавăн 19-мĕшĕнче 015525 №-пе регистрациленĕ.

"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун" – 78353, "Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515, "Сывлăх" – 11524, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ

РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ/
Т.В.ИЛЬИНА /яваплă секретарь/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
А.Х.ЛУКИЯНОВА, Н.Г.СМИРНОВА

Дежурнăй редактор В.И.СМИРНОВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".

ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 56-22-31 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
/8-835-51/ 2-12-90 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ

hypar2008@rambler.ru

Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: pop408@rambler.ru hypar@chtts.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çуртĕ» АУ компьютер центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану сулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 7009. Заказ 3973.